**Урокра**

Ваçça урок вĕренмен,
Вĕренме те тĕлленмен.
Кĕнекине кăларать,
Пуçне чиксе çеç ларать.
Ак учитель асăрхать:
Ма шăп ларать ку Ваçça?
Ахаль чухне йăсласа
Кансĕрлетчĕ вăл класа...
Черет çитрĕ Ваççана
Хутла-хутла пайлама:
– Улт хут улттă – вăтăр, – тет,
– Виççе пайлас – тăххăр, – тет.
Ахăлтатать пĕтĕм класс.
Ĕнтĕ Ваççан мĕн тăвас?
– Вĕренмен эп, – тет хуллен,
Ун пек тумап ялĕмрен.
«Кун пек намăс куриччен,
– Ваçça шутлать, – вĕренес
Вăййа тухса вĕçиччен
Урока хăтĕрленес!»

*Волкова, М. Урокра : [сăвă] / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 261.*